Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

64 (7489) № ✻ Юн кун, 2007 ҫулхи августăн (ҫурла) 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Ĕҫре тăрăшуллисем**

## Коллективра хисепре



*Александр Витальевич Николаев шалти ĕҫсен пайĕнче 2002 ҫултанпа ĕҫлет. Нумай вăхăт хушши ĕҫлемест пулин те милицин аслă лейтенанчĕ шанса панă ĕҫе тулли кăмăлпа пурнăҫлать. Ҫакна вара вăл тивĕҫнĕ Тав хучĕсемпе сăмахсем те ҫирĕплетеҫҫĕ.*

**Сăн ӳкерчĕкре: А.В. Николаев.**

**Р. МАКАРОВА сăн ӳкерчĕкĕ**

**Тĕслĕх илер**

## Раҫҫей шайĕнче палăрчĕҫ

Вăл е ку отрасльте пуҫарулăхпа палăракансене патшалăх хавхалантарса тăрать, тĕрлĕ грантсем уйăрать. Апла пулсан пĕр тăхтамасăр ăсталăха кăтартма пĕлмелле тата ăна туптамалла.

Акă кăҫал пирĕн районти икĕ вĕрентӳ учрежденийĕ Раҫҫей шайĕнче палăрчĕҫ. Вĕсем Нискасси тата Москакасси шкулĕсем пулчĕҫ, пĕршер миллион тенкĕ гранта тивĕҫрĕҫ.

Нискасси шкулĕ вĕрентӳ ĕҫĕнчи инноваци технологийĕсемпе анлă усă курать. Кунтах сиплев физкультурин «кĕлеткене тӳрĕ тытмалли шкул» пӳлĕмне тата «Районти эксперимент площадкине» йĕркеленĕ. Шкул пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕпе тачă ҫыхăнура ĕҫлесе пырать.

Москакасси шкулĕ вара Л.В. Занков системипе ĕҫлет. Ку база шкулне районти тата ытти тăрăхри чылай вĕрентӳ учрежденийĕсенче вăй хуракансем килсе ҫӳреҫҫĕ, опытпа паллашаҫҫĕ.

Тивĕҫлĕ хавхалантару вĕрентӳ ĕҫне анлăлатма, вĕрентӳ учрежденийĕсене кирлĕ йышши оборудованисемпе пуянлатма кайĕ. Иртнĕ ҫулхи тĕслĕхсем те ҫавнах ҫирĕплетеҫҫĕ.

Апла пулсан ытти шкулсен те вĕсенчен тĕслĕх илесчĕ, малаллах туртăнасчĕ. Паянхи пурнăҫ вара ҫĕнĕлле пурăнма хистет.

**ХАМĂР ИНФ.**

**Вырма – 2007**

### РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУҪАЛĂХСЕНЧЕ АВГУСТĂН 8-МĔШĔ ТĔЛНЕ ТЫРĂ ВЫРАС ĔҪСЕМ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ

***Колонкăсенче: 1.Вырма лаптăкĕ (гектарпа). 2.Вырнă (процентпа). 3. Тухăҫ (центнерпа). 4. Улăм пуҫтарнă (гектарпа).***

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 885 | 8 | 24,3 | 13 |
| “Волга” | 975 | 4 | 31,4 | 8 |
| “Восток” | 400 | 41 | 18,6 | 80 |
| “Герой” | 630 | 23 | 20,0 | 10 |
| К. Иванов яч. хис. | 383 | 4 | 20,0 | – |
| Ильич яч. хис. | 740 | 32 | 22,8 | 125 |
| Ленин яч. хис. | 895 | 10 | 21,0 | 15 |
| “Лидер” | 508 | 1 | 14,0 | – |
| “Оринино” | 777 | 30 | 22,0 | 167 |
| “Передовик” | 722 | 16 | 21,3 | 55 |
| “Свобода” | 1140 | 19 | 20,0 | 60 |
| “Сеятель” | 552 | 11 | 17,0 | 40 |
| Суворов яч. хис. | 820 | 25 | 36,0 | 30 |
| “Рассвет” | 1025 | 12 | 15,9 | 30 |
| “Ударник” | 1668 | 21 | 25,0 | 70 |
| Чапаев яч. хис. | 558 | 1 | 16,7 | – |
| “Чемеево” | 442 | 21 | 17,4 | – |
| Чкалов яч. хис. | 301 | 8 | 17,2 | – |
| Мичурин яч. хис. | 80 | – | – | – |
| Матвеев КФХ | 260 | 31 | 23,4 | 30 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **14836** | **15,1** | **22,7** | **733** |

## ВЫРМА ПАТТĂРĔСЕМ

Хуҫалăхсенчи комбайнерсем августăн 1 – 7-мĕшĕсенче ĕҫленин итогĕсене пĕтĕмлетес

**“Дон-1500” комбайнсен класĕнче мала тухнă тесе йышăнас:**

1 вырăнта – Суворов ячĕллĕ хуҫалăхри Николай Витальевич Павлов комбайнер экипажĕ , 484 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 300 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăнта – “Ударник” хуҫалăхри Иван Евграфович Анисимов комбайнер экипажĕ, 219 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – “Свобода” хуҫалăхри Валерий Александрович Соловьев комбайнер экипажĕ, 203 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**“Енисей – 1200” комбайнсен класĕнче мала тухнă тесе йышăнас:**

1 вырăнта – Ильич ячĕллĕ хуҫалăхри Вячеслав Иосифович Аврамов комбайнер экипажĕ , 230 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 300 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăнта – “Оринино” хуҫалăхри Ростислав Витальевич Ильин комбайнер экипажĕ, 229 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

2 вырăнта – “Оринино” хуҫалăхри Вячеслав Осипович Медов комбайнер экипажĕ, 229 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – Ильич ячĕллĕ хуҫалăхри Юрий Петрович Егоров комбайнер экипажĕ, 225 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**“Нива – СК-5” комбайнсен класĕнче мала тухнă тесе йышăнас:**

1 вырăна парас мар.

2 вырăнта – “Восток” хуҫалăхри Юрий Сергеевич Иванов комбайнер экипажĕ, 110 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 200 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – Ильич ячĕллĕ хуҫалăхри Евгений Петрович Васильев комбайнер экипажĕ, 102 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

3 вырăнта – «Восток» хуҫалăхри Василий Юрьевич Уткин комбайнер экипажĕ, 102 тонна тĕш тырă ҫапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

**Механизаторсем хушшинчи конкурс итогĕсене пĕтĕмлетекен районти комисси.**

**Республикăра**

## Аталану ыйтăвĕсене сӳтсе явнă

Тунти кун Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов республика Правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳҫисемпе канашлу ирттернĕ.

Шалти ĕҫсен министрĕн пĕрремĕш ҫумĕ Вячеслав Яковлев республикăри оперативлă лару-тăрупа, хăш-пĕр пасарта тата ярмăркkăра йĕркене мĕнле пăхăннипе паллаштарнă.

Ял хуҫалăх министрĕ Михаил Игнатьев вырма ĕҫĕсем мĕнле пыни ҫинчен пĕлтернĕ. Талăксерен вăтамран 9,5 пин тонна яхăн тĕш тырă пухса кĕртеҫҫĕ. Хуҫалăхсенче кĕрхи культурăсене акма ҫĕр хатĕрлеҫҫĕ.

Вĕрентӳ тата ҫамрăксен политикин министрĕ Галина Чернова канашлăва пухăннисене республикăри шкулсем ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне мĕнле хатĕрленнипе паллаштарнă. Тĕрĕслекен органсем график тăрăх пĕрремĕш хут Чăваш Ен шкулĕсене тĕрĕсленĕ, хăш-пĕр ҫитменлĕхсене пĕтерессипе ĕҫлеҫҫĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн Ертӳҫи Энвер Аблякимов Чăваш Ен Президенчĕ Н.В. Федоров ҫурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче Шупашкар хулинче тăвакан объектсенче ирттернĕ ĕҫлĕ пухусенче панă хушусем ҫинчен пĕлтернĕ. Ҫав шутра – тĕп хулан ҫыннисене тата хăнисене меллĕрех условисем туса парасси, лартнă йывăҫ-курăка упрасси, хута яракан объектсен таврашне вара илĕртӳллĕрех тата хальхи вăхăт ыйтнă пек тăвасси.

Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе ирттернĕ канашлура ҫавăн пекех республикăри ял-хуласене хăтлăрах тăвас ыйтăва пăхса тухнă, ҫав шутра – ҫыран хĕрринчи территорисене те. Чăваш Ен Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов Ҫĕнĕ Шупашкарта, Сĕнтĕрвăрри тата Муркаш районĕсенче ирттерекен ĕҫсене хак панă, вĕсем япăх пулнипе тивĕҫлĕ министрсемпе пĕрле муниципалитет пĕрлешĕвĕсен ертӳҫисене кĕске вăхăтрах ҫитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

**ЧР ПА пресс-службиx.**

**Районта**

## Стройматериалсем хакланни те, аш-какай йӳнелни те хăратмасть

“Агропромышленноҫ комплексне аталантарасси” наци проекчĕн виҫинче ял ҫыннисем ҫăмăллатнă кредитсем малалла илеҫҫĕ. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса ял ҫыннисем выльăх-чĕрлĕх усрама хуралтăсем тăваҫҫĕ, тĕрлĕ техника туянаҫҫĕ. Строительство материалĕсем хăрушла хакланни те, килти хушма хуҫалăхра туса илнĕ аш-какай хакĕ палăрмаллах чакни те ял ҫыннисене хăратмасть. Ял ҫынни ҫăмăл пурнăҫа хăнăхман вĕт.

Кăҫал районта “Россельхозбанк” урлă 271 ҫын 37 миллион та 668 пин тенкĕлĕх, Перекет банкĕ урлă 370 ҫын 53 миллион та 26 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ.

Уйрăмах пуҫаруллисем Ҫатракасси (54 ҫын кредит илнĕ), Мăн Сĕнтĕр (54 ҫын), Ярапайкасси (53 кредит) тата Катькас (50 ҫын) ял тăрăхĕсенче пурăнакансем шутланаҫҫĕ.

## 11 ҫемье ытларах йĕркеленнĕ,19 ача ытларах ҫуралнă

Кăҫалхи ҫичĕ уйăхра районта иртнĕ ҫулхи ҫак тапхăртипе танлаштарсан 19 ача ытларах ҫуралнă. Пĕлтĕр 215 ача кун ҫути курнă пулсан, кăҫал – 234 ача. Арҫын ачасем ытларах пулнине палăртмалла: 132 арҫын ача пуҫне 102 хĕр ача.

Арҫын ачасене Кирилл (13 ача), Артемий (11 ача), Даниил (8 ача), хĕр ачасене вара Анастасия (8), Екатерина (7), Анна (6) ятсене ытларах хунă. Икĕ ҫемьере икĕ йĕкĕреш ҫуралнă.

Мăшăрланакансен йышĕ те ӳссе пырать. Кăҫал пĕлтĕрхинчен 11 ҫемье ытларах йĕркеленнĕ, пĕтĕмпе - 110 мăшăр. Качча каякан хĕрсен ӳсĕмĕ 18 – 28 ҫулсемпе, авланакан арҫынсен – 25 – 34 ҫулсемпе танлашать.

Уйрăлакансен хисепĕ пĕр шайрах тăрать: пĕлтĕр – 38 ҫемье, кăҫал – 39 ҫемье.

Иртнĕ ҫулхипе танлаштарсан, вилекенсен шучĕ чакни савăнтарать. Иртнĕ ҫул 412 ҫын пурнăҫран уйрăлса кайнă пулсан, кăҫал 395 ҫын вилнĕ. Арҫынсем вăтамран 58 ҫулта, хĕрарăмсем 73 ҫулта ҫĕре кĕреҫҫĕ.

## Коммуналлă ҫăмăллăхсемсĕр пурăнма ҫук

Паянхи пурнăҫа коммуналлă ҫăмăллăхсемсĕр тĕшмĕртме ҫук. Ара, ҫирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте пурăнатпăр мар-и? Кăҫалхи ҫур ҫулта ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх предприятийĕсем хваттерсене 13 пин гкал. ăшă, 176 пин кубла метр шыв панă, таса мар шыв 73 пин кубла метр юхтарса кăларнă.

Укҫа ҫине куҫарсан кăтартусем ҫапла: пĕтĕмпе 15997 пин тенкĕлĕх пулăшу панă. Ҫав шутран 47 проценчĕ ăшăпа тивĕҫтерме, 18 проценчĕ ҫурт-йĕре пăхса тăма, 8 проценчĕ шывпа тивĕҫтерме кайнă.

Ял ҫыннисем коммуналлă ҫăмăллăхсемпе тивĕҫтересси кунран-кун лайăхланса пырасса шанаҫҫĕ. Ара, ҫирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте пурăнатпăр мар-и?

**Н. ГРИГОРЬЕВА.**

**Официаллă**

## Чăваш Республикинче чи пĕчĕк ĕҫ укҫи ҫинчен КИЛĔШӲ

Эпир, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн, Чăваш Республикинчи профсоюз организацийĕсен “Чăвашрессовпроф” пĕрлешĕвĕн, Чăваш Республикинчи ĕҫ паракансен пĕрлешĕвĕн полномочиллĕ представителĕсем, малалла Енсем, Раҫҫей Федерацийĕн Конституцийĕпе, Чăваш Республикин Конституцийĕпе, федераци саккунĕпе, Чăваш Республикин право акчĕсен нормативĕсемпе килĕшӳллĕн, Раҫҫей Федерацийĕн Ĕҫ кодексне, Чăваш Республикин “Социаллă килĕштерсе ĕҫлесси ҫинчен” саккунне, Чăваш Республикин Президенчĕн 2006 ҫулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 87 № “Чăваш Республикинче ĕҫ укҫине ӳстерес енĕпе пурнăҫа кĕртмелли хушма мерăсем ҫинчен” Указне, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикинчи ĕҫ паракансен пĕрлешĕвĕ, Чăваш Республикинчи профсоюз организацийĕсен “Чăвашрессовпроф” пĕрлешĕвĕ 2005-2007 ҫулсенче социаллă ҫыхăну тытса ĕҫлесси ҫинчен тунă килĕшĕве тĕпе хурса аяларах илсе кăтартнă ҫак Килĕшĕве (малалла – Килĕшӳ) алă пусатпăр:

**1 статья**

Чăваш Республикинче чи пĕчĕк ĕҫ укҫи шайне 3295 тенкĕ чухлĕ туса хурас.

**2 статья**

Чăваш Республикинче чи пĕчĕк ĕҫ укҫи шайне Чăваш Республикин территорийĕнче ĕҫлекенсем валли, федераци бюджетĕнчен укҫа уйăракан организацисенче ĕҫлекенсемсĕр пуҫне, палăртаҫҫĕ.

**3 статья**

Чăваш Республикинче чи пĕчĕк ĕҫ укҫи парса тăрассине ҫаксем пурнăҫлаҫҫĕ:

Чăваш Республикин республика бюджечĕ укҫа уйăракан организацисем, Чăваш Республикин республика бюджечĕн укҫи-тенкинчен, бюджет тулашĕнчи укҫа-тенкĕрен, ҫавăн пекех предпринимательлĕхрен е тупăш кӳрекен ытти ĕҫсен укҫи-тенкинчен;

Муниципалитет тытăмĕсен бюджечĕсем укҫа уйăракан организацисем, Чăваш Республикин муниципалитет тытăмĕсен бюджечĕсен укҫи-тенкинчен, ҫавăн пекех предпринимательлĕхрен е тупăш кӳрекен ытти ĕҫсен укҫи-тенкинчен;

Ытти организацисем – хăйсен укҫи-тенкинчен.

**4 статья**

Енчен те ĕҫ паракансем, хăйсен ĕҫне Чăваш Республикин территорийĕнче пурнăҫлаҫҫĕ пулсан, Килĕшĕве официаллă пичетлесе кăларнă хыҫҫăн 30 кун хушшинче унпа ҫыхăну тытма килĕшменни ҫинчен Чăваш Республикин ĕҫ тăвакан влаҫĕн уполномоченнăй органне сăлтавласа ҫырса пĕлтермесен Килĕшӳ ҫавăн пек ĕҫ паракансемшĕн вăйра тăрать, ăна пĕр пăркаланмасăр пурнăҫламалла.

**5 статья**

Федераци саккунĕпе чи пĕчĕк ĕҫ укҫин шайне Чăваш Республикинчи килĕшӳрен ирттерсе палăртсан ҫак Килĕшӳ хăйĕн вăйне ҫухатать.

**6 статья**

Килĕшӳ 2007 ҫулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ ячĕпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ С.ГАПЛИКОВ.**

**Чăваш Республикин ĕҫ паракансен пĕрлешĕвĕ ячĕпе Чăваш Республикин суту-илӳпе промышленноҫ палатин президенчĕ И. КУСТАРИН.**

**Чăваш Республикинчи профсоюзсен организацийĕсен “Чăвашрессовпроф” пĕрлешĕвĕ ячĕпе Чăваш Республикинчи профсоюзсен организацийĕсен “Чăвашрессовпроф” пĕрлешӳ председателĕ А. КОРШУНОВ.**